3729 44-127

Н. И. Шелепи

# Тискер кайăксем



Чăвашгосиздат - 1944

ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА

# ТИЛĔ ТУС

Эп — тилĕ тус — пит чее,
Куна пурте пĕлеççĕ.
Хĕлле мана йĕрпеле
Питĕ хытă йĕрлеççĕ.

Пăшалпа та переççĕ,
Капкăнсем те хураççĕ,
Йытăсемпе шыраççĕ,
Чĕрене хыт çураççĕ.

Çырма-çатра хушшинче
Пĕрмай тарса çӳретĕп,
Çĕрле вăрттăн-варттăн çеç
Яла пырса кĕретĕп.

Автан тусăн сассине
Пĕтĕм чунтан юратап,
Ăна эпĕ хăш чухне
Айхинчен те вăратап.

Тӳрĕ килсен чăхха та
Каплаттарса каятăп.
Ырă хаклă тирĕмпе
Çынсене эп ăшăтап.

---

## УПА

Эпĕ упа — утаман,
Ик урапа утакан,
Пур кайăкран хытăрах
Мĕкĕрттерсе улакан.

Çăва тухсан — вăрманта
Вĕллесене ватакан,

Тутлă пылне çиекен,
Ĕнесене тытакан.

Усал сиврен хăраса
Хĕлĕпеле шăтăкра,
Ура тупань çуласа,
Вилнĕ пекех сывратăп.

Çуркунне тин вăранап,
Тинех çисе тăранап.
Вара сиксе ташлатăп,
Йăкăш-йăкăш шăватăп.

## КАШКĂР

Эпĕ кашкăр — кашаман,
Выçă чух пит асакан,
Хĕлле сурăх çимешкĕн
Хӳме урлă каçакан.

Уншăн мана тытсассăн
Урнă пекех хӗнеççӗ,
Тире сӳсе илеççӗ,
Сутса укçа тăваççӗ.

## УТĂ ÇИНЧЕ

Улăх çийӗнче
Курăк тӗпӗнчен
Çави шăхăрса
Пырать чашлатса.

Çӗлен-калтасем
Сехрисем хăпса
Шăтăкӗсене
Кӗреççӗ тарса.

Хисепӗ те çук
Хурт-кăпшанкăсем,

Иӑлттин те ялттин
Сиксе ӳкеҫҫӗ.

Симӗс пӗркенчӗк
Айне витӗнсе,
Хитре чечексен
Ҫумне лӑпчӑнса,
Вӑркӑнчӗ карӑш.

Хӑравҫӑ мулкач
Унтан хӑраса,
Таҫта ҫӑвана
Пытанчӗ тарса.
Шӑмӑсӑр шапа
Мулкачран тарса,
Ҫӗлен ҫӑварне
Кӗчӗ вӑркӑнса.

---

Цена 50 коп.

*Н. И. Шелепи*

# *Дикие звери*

на чувашском языке

Редактор К. Чулгась.

НТ00194 Подписано к печати 16-VI-44 г.
Заказ 1110 Тираж 10.000 экз.

Типография № 1 Упр. полиграф. пром.
при СНК ЧАССР г, Чебоксары.